2008 çул – Çемье çулталăкĕ

Санпа, атте, пурнăç илемлĕрех

Нумаях пулмасть район администрацийĕн ырă йăласен залĕнче ача ашшĕн çемьери пĕлтерĕшĕ çинчен çавра сĕтел хушшинчи калаçу иртрĕ. Унта вырăнсенчи хĕрарăмсен канашĕсен ертӳçисемсĕр пуçне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, шкулсенчи психологсем, çемьесемпе ĕçлекен пур учреждени представителĕсем хутшăнчĕç. Кашниех асăннă темăпа хăй шухăшне каларĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А.Е. Андреева асăннă мероприятие пĕтĕмлетсе çакна палăртрĕ: çемье телейĕ кашнинчен килет– ашшĕнчен те, амăшĕнчен те. Калаçăва вара район администрацийĕн ЗАГС пайĕн ертӳçи М.П. Рубцова илсе кăтартнă тĕслĕхрен пуçлас килет.

Урамра хăйăр çинче ачасем выляççĕ.

– Мана атте ак мĕнле пысăк машина илсе пачĕ, – савăнăçне пытараймасть Ваня.

– Мана вара пысăк йытă илсе паратăп терĕ, – шăкăлтатса калаçать унпа Петя.

Вĕсемпе пĕрле вылякан Юрик вылянă çĕртенех тăчĕ те пĕр сăмах чĕнмесĕр пуçне усса килелле утрĕ...

Сахал тĕл пулаççĕ-и кун пек тĕслĕхсем пурнăçра?

– Çак ача килне кайсан амăшĕнчен ашшĕ ăçтине ыйтатех, – терĕ Маргарита Петровна. Вăл каланипе килĕшмесĕр тăма май çук пулĕ:

– Çемьере пĕр-пĕрне ăнласа пурăнма тăрăшмалла. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнакан тулли çемьере кăна ачасем хăйсене телейлĕ туяççĕ.

Шел пулин те, иртнĕ çул уйрăлакансем ытларах пулчĕç. Виçĕм çул 59 çемье саланнă пулсан, пĕлтĕр вĕсен йышĕ 74-а çитрĕ. Çемье арканас туртăм кăçал та палăрать: иртнĕ çул 2 уйăхра 9 машăр уйрăлнă пулсан, кăçал 10 машăр кашни хăйĕн сукмакĕпе утма пуçларĕ. Хăйсен пурнăçĕнче кăна улшăну пулчĕ-ши? Ачисен те ĕмĕтшухăшĕсен çуначĕ хуçăлчĕ пулĕ. Аслисем хамăр проблемăсемпе пурăннă чух ачасен чун ыратăвĕ пирки шутлама ерçӳ çук-ши?

Амăшĕ ачашăн чăннипех те чи сывăх çын пулнине каш-ниех лайăх ăнланатпăр. Анне апат пĕçерет, кил-çурта тирпейлет, пурте тирпейлĕ çӳреччĕр тесе тăрăшать, килти хуçалăхри ĕçсем те ытларах ун çинче, ача чирлесен куç хупмасăр ирттернĕ каçсем, хĕрĕ-ывăлĕ вăхăтра киле килмесен чĕререн куляннипе шуралнă çӳç пĕрчисем...

Ашшĕ мĕн тăвать çак вăхăтра? Ун чĕри те чул мар вĕт. Амăшĕ пекех ачана ашшĕ те кирлĕ. Унăн ашшĕн авторитечĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Уйрăмах арçын ачашăн. Кам вĕрентĕ ăна чăн-чăн арçын пулма? Вăхăтра каланă çирĕп сăмах тӳрĕ çултан пăрăнасран сыхлать ачана. Районти шалти ĕçсен пайĕн çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен подразделени ертӳçи каланă тăрăх преступлени çулĕ çине тăракан ачасенчен ытларахăшĕ ăнăçсăр çемьесенчен. Район администрацийĕн çул çитмен çамрăксемпе тата вĕсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен комиссинче çул çитмен 49 çамрăк учетра тăрать. Иртнĕ çул çул çитмен 35 çамрăк хутшăннипе 45 преступлени пулнă. Виçĕм çул çул çитмен 32 çамрăк 21 преступлени тунă пулнă. Çак тĕслĕхсем хăйсемех ашшĕамăшĕсене ачисем çине çарăнса пăхма, хăйсен тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçлама хистеççĕ. Эрех-сăраран айккинерех пăрăнма.

Статистика çакна кăтартса парать: иртнĕ çул çул-йĕр инкекĕсенче 24-ăн вилнĕ пулсан, вĕсенчен 23-шĕ – арçынсем. Ансăртран алкогольпе наркăмăшланнă 8 тĕслĕхрен 7-шĕ арçынсемпе пулса иртнĕ. Хăйсем çине хăйсемех алă хуракан 27 çынран 23-шĕ каллех арçынсем. ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов тĕл пулура Раççейре арçынсем вăтамран 58 çул, хĕрарăмсем 72 çул пурăннине палăртрĕ. Вăтамран çын ĕмĕрĕ 64 çулпа танлашать. Республикăра юлашки 2 çулта вăтам ĕмĕр 8 уйăх тăсăлни те лăпланса лармаллине пĕлтермест. Арçынсен ĕмĕрĕ кĕскереххине вара Владислав Григорьевич акă мĕнре курать. Унăн шухăшĕпе хĕрарăмсем арçынсенчен çирĕпрех: çут çанталăкранах килет çакă. Тепĕр енчен арçынсем теветкеллĕрех тытаççĕ, йывăр ĕçсене хăйсем çине илеççĕ. Çав хушăрах, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ палăртнă пек, сиенлĕ йăласемпе туслă пулнипе те арçынсем хăйсен ĕмĕрне хăйсемех кĕскетеççĕ. Кăна çӳлерех илсе кăтартнă тĕслĕхсем те çирĕплетсе параççĕ. Çын ĕмĕрĕ çине çавăн пекех витаминлă апат çини те, çемьери хутшăнусем те пысăк витĕм кӳреççĕ.

Çакă тепĕр хутчен хамăр шăпа ытларах хамăртан килнине кăтартса парать. Хамăрăн кăна-и? Ачасен малашлăхĕ мĕнле пуласси вăл мĕнле воспитани илсе ӳснинчен килет вĕт. Тĕл пулăва килнĕ Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Тамара Николаевнапа Иван Дмитриевич Вязовсен çемье вăрттăнлăхне уçса памах тивет пулĕ.

– Пĕри теприн шухăшĕпе килĕшмен чухне те эпир пĕри теприне хирĕçлесе пĕрпĕрин авторитетне ачасем умĕнче ӳкермен, – терĕç вĕсем.

Муркашри кĕлĕ çуртĕнчи Федор атте православи тĕнĕ çемье çине мĕнле пăхни çинче чарăнчĕ.

– Ан вĕлер, ан вăрла, ан кӳрентер, – акă мĕн тĕп вырăнта православи тĕнĕнче. Çемьере те çавăн пекех: ашшĕ-амăшĕ ачине усала вĕрентмест. Ашшĕ-амăшĕсен хăйсен тивĕçне йĕркеллĕ пурнăçламалла кăна. Çемье ачашăн мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлине ача çуртĕнче ӳсекен ачасем уйрăмах лайăх пĕлеççĕ пулĕ. Оринин ял тăрăхĕнче пурăнакан Фаина Петровнăпа Владимир Михайлович Александровсем епле-ха манса кайччăр ача çуртĕнчен тухсан киле çитиччен хĕр ача миçе хутчен тӳрех атте, анне тесе каланине. 2 çулта ача çуртне лекнĕскер, паян çĕнĕ çемьере çемье ăшшине тупрĕ. Çакăн пирки каласа панă чух эпир пурте пĕлекен Владимир Александров композиторăн куçĕсем шывланчĕç. Эппин, арçынсен чунĕ хытă тени те тĕрĕс мар иккен. Ашшĕн чунĕ амăшĕнни пекех ыратать ачашăн, амăшĕ пекех юратать ачине. Ача та çавăн пекех: унăн ашшĕпе амăшĕ иккĕшĕ те чи хаклă та юратнă çынсем. Хăйсем çуратнă ачисен юратăвне урăх нимĕнпе те улăштарас марччĕ çеç: эрех черккипе те, ирĕк пурнăçпа та.

«Аттепе анне пулсассăн, пуринчен те эп пуян». Юрăри çак сăмахсем мĕн тери хаклине пирĕнтен кашниех лайăх ăнланать. Эппин, хамăр ачасем хăйсене пуян та телейлĕ туйччăр – çакă пулмалла пулĕ кашни амăшĕшĕн, кашни ашшĕшĕн пурнăç пĕлтерĕшĕ.

Л.ПАВЛОВА.

Оборонăллă-массăллă тата спортпа сиплев ĕçĕсен уйăхлăхĕ

Пурте активлă пулчĕç

Оборонăллă-массăллă тата спортпа сиплев ĕçĕсене халаллана мероприятисене эпир январь уйăхĕнчех тытăнтăмăр. Январĕн 5-мĕшĕнче шашкăлла тата шахматла выляссипе район турнирĕ иртрĕ. Шашка енĕпе 4-мĕш, шахматла выляссипе 5-6-мĕш вырăнсене тивĕçрĕмĕр. Çав уйăхри 17-18-мĕшĕсенче физкультура енĕпе район олимпиади пулчĕ. Рена Трофимова, Юра Михайлов, Олеся Ремнева, Андрей Чекмаков палăрчĕç. Январĕн 19-мĕшĕнче 5-мĕш классем хушшинче пионербол пулчĕ, 5-мĕш «а» класс çĕнтерчĕ. Январĕн 21-мĕшĕнчен тытăнса 30-мĕшĕччен вара аслă классем волейболла выляссипе ăмăртрĕç.

Январĕн 21, 22, 23-мĕшĕсенче шкулти право йĕркелĕхĕн канашĕн ларăвĕ пулчĕ. Унта япăх ĕлкĕрсе пыракан вĕренекенсене хăйсен ашшĕ-амăшĕсемпе чĕнтĕмĕр, 30 вĕренекене итлерĕмĕр.

Январĕн 24-мĕшĕнче Сывлăх кунĕ пулчĕ. 3–11-мĕш классенче вĕренекенсем йĕлтĕрпе чупассипе ăмăртрĕç. Январĕн 14–25-мĕшĕсенче шкул тирĕнче пур классем хушшинче те пĕчĕк калибрлă винтовкăран тĕл пересспипе ăмăрту иртрĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Сталинград патĕнче пынă çапăçусем пулнăранпа 65 çул çитнине халлласа районти историпе краеведени музейĕнче районти ача-пăча библиотекин ĕçченĕсемпе пĕрле вăрçă ветеранĕпе А.К. Капитоновпа тĕл пулу йĕркелерĕмĕр.

Февралĕн 11–19-мĕшĕсенче «Салтака пулăш» акци иртрĕ. 1–11-классенче вĕренекенсемпе тата вĕсен ашшĕ-амăшĕсем Чечняна яма 6800 тенкĕлĕх посылкăсем хатĕрлерĕç. Ку вăл 1530 тĕрлĕрен хатĕр.

Февралĕн 12-мĕшĕнче «Хаваслă стартсем» пулчĕç.

Тепĕр кунне Çветуй Валентин кунĕ пулчĕ, Муркаш лицейĕнче вĕренекенсемпе тĕл пулу иртертĕмĕр.

Февралĕн 13–14-мĕшĕсенче пĕчĕк калибрлă винтовкăран пересспипе республика ăмăртăвĕсем иртрĕç. Унта пирĕн шкултан А. Андреев, Д.Плечов, А. Евстафьев, В. Николаев, Д. Скворцов кайма тивĕç пулчĕç. Ăмăртуран вĕсем 1-мĕш вырăн çĕнсе илсе таврăнчĕç.

Уйăхлăх вĕçленес умĕн, февралĕн 20-мĕшĕнче, патриотика юррисен районти конкурсĕ иртрĕ. Шкултан унта 4 вĕренекен хутшăнчĕ. 9-мĕш «б» класри Ирина Михайлова вокалпа юрлакансем хушшинче чи маттурри пулчĕ.

Февралĕн 21-мĕшĕнче оборонăллă-массăллă тата спортпа сиплев ĕçĕсен уйăхлăхĕн итогĕсене пĕтĕмлетрĕмĕр. Уйăхлăх вăхăтĕнче уйрăмах палăрнă классемпе вĕренекенсем парнесемпе грамотăсене тивĕçрĕç. Çав кунах чи вăйлисен конкурсĕнче çĕнтернисем хушшинче финал вăййисем пулчĕç. Уява Раççей Геройĕ Евгений Борисов, Афганистан тата Чечен вăрçисен участникĕсем те хутшăнчĕç.

Г. СИДЮШКИНА,
Муркаш шкулĕн директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ.

Вăтам шкула йĕркеленĕренпе – 25 çул

Шăнкăрав уява чĕнет

Шкул шăнкăравĕ... Пирĕнте кашнинчех ырă йĕр хăварнă вăл. Аса илĕр-ха халиччен эпир пĕлмен пĕлӳ тĕнчине, парта хушшине йыхăракан пĕрремĕш шăнкăрава.

Хальхинче Москакассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта малтанхинчен урăхларах янăрарĕ шăнкăрав. Вăл çак шкулта вĕреннĕ, вĕрентнĕ çынсене тепĕр хут иртнĕ кунсем патне илсе çитерчĕ. Çамрăк ăрăва аслисем пухнă ăсталăхпа ăс-хакăла малалла татах çивĕчлетме вăй-хал пачĕ вăл. Вăтам шкул 25 çул тултарни вĕсене тӳрремĕнех пырса тивет-çке. Авă еплерех хавас юрăсем шăратаççĕ кĕçĕн класра вĕренекенсем. Мĕнлерех уççăн янăраççĕ тата сăввисем. Аслă классенче вĕренекен ташăçăсен çăмăл хусканăвĕсем те кунта уяв пыни пирки пĕрре те мантармаççĕ.

Москакасси шкулĕнчен тĕрлĕ çулсенче вĕренсе тухнисем, кунта ĕçленĕ учитель-ветерансем, хăнасемпе спонсорсем, паянхи шкул ачисемпе педагогсем пуçтарăнчĕç кунта. Çак шкултан вĕренсе тухнисем паян çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче пурăнаççĕ. Мĕн тĕрлĕ професси çынни çук пулĕ вĕсем хушшинче. Шел, кунта вĕреннисем, вĕрентнисем пурте çук паян пирĕн хушăра. Пирĕнтен уйрăлса кайнă Л.Б. Царев, Н.Н. Вазиков, А.С. Ильин, А.Я. Ялугина, М.М. Александрова, П.П. Суворов, А.Е. Марасанов ветеран-учительсене асăнса пĕр минут шăп тăнă хыççăн, вĕсем пурăннă вăхăтра шкул мĕнле пурăннине пĕлес тĕллевпе кăштах каялла уçар-ха истори страницисене.

Москакасси ялĕнчи шкула 1908 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕнче хута янă. Унччен кунти кĕçĕн çулхи ачасем Ахмане, Ситуккасси, Хачăк Сали, Уйкас-Хачăк, Калмăккасси шкулĕсене çӳренĕ. Аслисем Мăн Сĕнтĕр, Оринин, Калайкасси ялĕсене çӳренĕ. Ачасене вĕренме меллĕ пулман.

1982 çулта Москакасси ялĕнче вăтам шкул туса хунă. Виçĕ хутлă шкула Юнкăпуçĕнчи МСО строителĕсем çĕкленĕ. Шкул архивĕнче вĕсен ячĕсем сыхланса юлнă. Акă вĕсем: Е.М. Ирзакова, А.С. Пушкин, М.П. Овчинников, В.Г. Воробьев, М.Ф. Поликарпов, Ю.Е. Сорокин, В.Ф. Кольцов.

Паян вара залра çак истории хăйсен кун-çулĕ витĕр кăларнă шурă çӳçлĕ ветерансем ларараççĕ. Вĕсенчен пĕри – 80-мĕш çулсенче çак шкулта вĕрентнĕ В.И. Беспалова. Акă мĕнле аса илет çак тапхăр пирки учитель-ветеран:

– Ахальтен суйламан эпĕ учитель профессине. Манăн атте çак шкултах ачасен юратнă учителĕ пулнă. Эппин, хĕрĕ епле ан юраттăр-ха хăй ашшĕне, унăн ĕçне? Ĕмĕрĕм Москакасси шкулĕнчех иртрĕ. Çĕршер ачана пурнăç çулĕ çине кăларма тӳр килчĕ. Уншăн савăнатăп çеç, эпĕ телейлĕ.

Шкулта 38 çул ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă С.Ф. Ершован та çав çулсем паянхи кун пекех куç умĕнче тăраççĕ:

– Урокра ачасем вылясаташса ларнине курман эпĕ. Ĕçлетчĕç урокра тăрăшсах. Вăрçман эпĕ ачасене нихăçан та. Эпĕ вĕрентнисенчен çурри ытла аслă пĕлӳ илчĕ. Ял халăхĕн кăмăлне концертсемпе çĕклеттĕмĕр.

Н.В. Васильевара та ырă аса илӳсем хăварнă вĕсем, шкулта вĕрентнĕ вăхăтсем. Кусем Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ ятне илнĕ учитель-ветеранăн сăмахĕсем:

– Çуллахи вăхăтра колхозниксемпе пĕрле уйра ĕçленĕ. Вĕсем каннă вăхăтра эпир, учительсем, агитаци ĕçне пуçлаттăмăр. Халăхăн патриотла туйăмне тытса пымалла-çке. Атăл урлă вутăшанкă хатĕрлеме те хамăрах каяттăмăр.

Çук, шăпи Москакасси шкулĕпе сыхăннишĕн никам та ӳпкелешмест. Пурнăç çулĕ хăйсене шкулпа сыхăнтарнăшăн савăнаççĕ çеç вĕсем.

Вĕсенчен чылайăшĕ халь тивĕçлĕ канура ĕнтĕ, нумайăшĕ паян та юратнă ĕçре. Акă вĕсем, юратнă учительсем: В.И. Беспалова, Н.Н. Яндимирова, Л.С. Парандеева, Е.Б. Иванова, Н.В. Шутеева, А.П. Полякова, Р.Г. Соловьева, З.П. Митта, Ф.Ф. Тринитатова, Н.В. Васильева, С.Н. Ершова, Н.В. Шутеева, М.В. Шурнеева, Л.А. Воронина, С.А. Галкина, А.А. Архипов, Г.Ф. Гаврилова.

Вăхăт сисĕнмесĕр иртет. Паян та, 2000 çулсенче те питĕ пултарулла учительсем ĕçлеççĕ Москакасси шкулĕнче. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕн ятне илнĕ С.Ф. Желтова, Раççей вĕрентӳ ĕçĕн хисеплĕ ĕçченĕн ятне тивĕçнĕ Р.В. Волкова, Л.И. Желтова, В.Ю. Григорьева, СССР вĕрентӳ отличникĕ Р.С. Савельева. Кам пĕлмест пулĕ районта Л.Е. Карпова, К.П. Сорокинана, Ю.И. Григорьевана, М.Г. Матросована, С.А. Купцована, Р.Г. Федоровна, И.Ф. Кожевникована, А.В. Макарова, С.Р. Кириллова.

Учитель... Сан пархатарлă ĕçӳ пĕрре те çăмăл мар. Мĕн тери телей сана пĕрле ĕçлекенсем, хăвăн вĕренекенӳсем ăнланни. Иккĕлле телей мар-и вара тата хăвна килте пĕр сăмахсăрах ăнланни, сан савăнăçупа ыратăвна туйни. Ниме пăхмасăр хăв ачусем те санăн çулупах кайни... Çакă вара эсĕ хăвăн пурнăç çулне тĕрĕс суйланине тепĕр хут çирĕплетет.

Москакассинчи вăтам шкулта та пур вĕсем: учительсен çемье династийĕсем: Сорокинсем, Желтовсем, Ивановсем. Паян вĕсем пурте пĕр шкулта ачасене пĕлӳ тĕнчи тăрăх илсе çӳреççĕ.

Москакасси шкулĕ хăйĕн пĕр ĕмĕр историне çеç çырчĕ-ха. Эппин, малалла татах та пулĕç-ха учительсен çĕнĕ çемье династийĕсем. Малалла тата маттур учительсемпе йышланĕ-ха ахаль те пултаруллă коллектив.

Анна ЦАРЕВА.
Москакасси шкулĕ.

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

Акăлчан чĕлхин эрни иртрĕ

Февралĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 1-мĕшĕччен пирĕн Çатракасси шкулĕнче акăлчан чĕлхин эрни пулчĕ. Интереслĕ, ăс-тăна аталантаракан мероприятисем пулчĕç шкулта: 5-мĕш класра урок-КВН, 4-мĕшпе 11-мĕш классенче уçă уроксем, «Звездный час» тата «Своя игра» вăййисем. Эпир, ачасем, вĕсене кашни кун чăтăмсăррăн кĕтрĕмĕр.

Акăлчан чĕлхин учительници Вера Владиславовна çак мероприятисене тĕплĕн, чуна парса хатĕрленни куç кĕретех. Çавăнпа вĕсем интереслĕ те хĕрӳллĕ, тупăшуллă самантра иртрĕç. Акăлчанла шухăшлама, калаçма, выляма пире питĕ килĕшрĕ. Пирĕн чĕлхе те пуянланчĕ.

Уçă уроксем пуриншĕн те усăллă пулчĕç: ачасемшĕн те, курма пынă учительсемшĕн те. Вера Владиславовна ирттернĕ уроксене те, тĕрлĕ мероприятисене те лайăх хак пачĕç.

Урок-КВН-ра, «Своя игра» вăййăра тĕрлĕ çĕршывсем çинчен, паллă çынсем, культура çинчен калаçрăмăр, хамăр пĕлĕве те тупăшсах кăтартма тăрăшрăмăр.

Хăйне евĕрлĕ питĕ интереслĕ, ачасен асĕнче юлнă вăйă вăл – «Звездный час». Вăййăра тĕрлĕ классенче вĕренекен пĕр çемьери ачасем, пĕр командăна тĕвĕленсе, пĕр-пĕрин хушшинче çивĕччĕн кĕрешрĕç. Кунта Димитриевсен икĕ, Лебедевсен, Барминовсен, Тепловсен, Скворцовсен, Борисовсен, Сретинскийсен çемйисем активлă пулчĕç. Вăййăра чи пултаруллисем çĕнтерчĕç.

Аслă классем хушшинче «Своя игра» вăййăра çĕнтернĕ Лата Димăна мухтас килет. Вăл акăлчан чĕлхипе чăннипех туслине пурте куртăмăр.

Унсăр пуçне классенче акăлчанла стена хаçачĕсем кăларчĕç. Вĕсенче Шекспир çинчен интереслĕ сонетсем, статьясем, сăвăсем пулчĕç.

Çакăн пек интереслĕ те усăллă пирĕн шкулта вĕренме.

Надежда ДИМИТРИЕВА,
Çатракасси шкулĕнче 5-мĕш класра вĕренекен.